Налук ыйтăвĕсемпе

# Парăм никама та чыс тумасть

Кăçалхи январь – июль уйăхĕсенче районĕпе бюджет тата бюджетлă мар фондсене тĕрлĕрен тӳлевсем 113124 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ку вăл 142,6 процент пулать. Налук тӳлевĕсене федераллă бюджета 11480 пин тенкĕ куçарнă, республика бюджетне – 31310 пин тенкĕ, вырăнти бюджета – 26528 пин тенкĕ, бюджетлă мар фондсене – 43806 пин тенкĕ.

Вырăнти бюджета куçарса панă тӳлевсен шутĕнче уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук пысăк вырăн йышăнать. Отчетлă тапхăрта ăна 20911 пин тенкĕ (78,8 процент) куçарнă. Пурлăх çине хуракан налук – 134 пин тенкĕ (0,5 процент), çĕр налукĕ – 683 пин тенкĕ (2,6 процент), вмененнăй тупăшран илекен пĕрлехи налук – 4225 пин тенкĕ (15,9 процент).

Çулталăк пуçланнăранпа налук тӳлевĕсем енĕпе парса татман парăм 1913 пин тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ, 3462 пин тенкĕпе танлашрĕ. Вăл шутран парăм вырăнти налуксем тĕлĕшпе 5 пин тенкĕ пысăкланчĕ, августăн 1-мĕшĕ тĕлне 370 пин тенкĕпе танлашрĕ.

Паллă ĕнтĕ, парăм никама та чыс тумасть. Апла пулин те организацисем, предпринимательсемпе уйрăм çынсем хушшинче налук тӳлевĕсене, пĕрлехи социаллă налука, обязательнăй пенси страхованийĕн страховани взносĕсене парса татассипе пысăк парăмлисем çук мар. Çапла хăтланни вăл вырăнти тата республика бюджетне хавшатни пулса тăрать. Организацисемпе предприятисенчен пысăк парăмлисем шутĕнче çаксем: “Спецмонтажгазăн” 3 № тресчĕ”, “Хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацийĕ” хупă акционер обществисем, “Компания “Хмель” хупă акционер обществин Муркашри филиалĕ, “Моргаушагропромснаб” тата “Пельмени кафе” муниципаллă унитарлă предприятисем, “Агроном”, “Лидер” агрофирма”, “Содружество”, “МилТрейд”, “Волготрейдмонтаж”, “Волга”, “Декор”, “Моргаушрайбыт”, “Трасса М-7”, “Чăваш сăри”, “Нива” агрофирма”, “Рассвет” агрофирма”, “Хлебороб” агрофирма”, “Моргаушагропромхимия” чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, “Спецмонтажгаз” уçă акционер обществи, “Динамо”, К. Иванов яч. хис., Чапаев яч. хис., “Сеятель”, Чкалов яч. хис., Ильич яч. хис., Ленин яч. хис., “Чемеево”, “Свобода”, Е. Андреев яч. хис., “Передовик” ял хуçалăх производство кооперативĕсем, “Моргаушимежрайгаз” филиалĕ.

Предпринимательсемпе харпăр хăй ĕçĕпе ĕçлекен уйрăм çынсем хушшинче те парăмсене вăхăтра парса татма васкаманнисем сахал мар. Вĕсен шутĕнче В.В. Ефремова, В.Г. Иванов, З.П. Кожевникова, Н.Р. Васильева, А.К. Кириллов, И.Н. Никитин, Л.И. Васильева, Н.В. Лукшина, Н.А. Павлов, В.Л. Егорова, К.Г. Сергеева, В.А. Никоноров, С.Н. Ошманов, А.Ю. Соловьев, Е.Г. Спиридонова, Ю.И. Тихонов, Е.Г. Чернова, Е.З. Миронов (Юнкăпуç ялĕ), Г.Н. Белугин (Нискасси ялĕ), М.А. Андреев (Çĕн Чемей ялĕ), А.Г. Тяпкин (Мăн Шашкар ялĕ), А.В. Смирнов (Итакачкасси ялĕ), В.Г. Васильев (Мăн Тутаркас ялĕ), А.А. Смирнов (Уйкас ялĕ), И.А. Герасимов (Шаптак ялĕ), М.И. Романов (Кĕртекасси ялĕ), В.А. Аристархов (Хыркасси ялĕ), А.И. Андреев (Тушкасси ялĕ), П.М. Федоров (Хопкĕпер ялĕ), В.А. Сергеев (Юнкă ялĕ), Ю.И. Григорьева (Патаккасси ялĕ), В.П. Столяров (Москакасси ялĕ), Ю.В. Данилов (Чурикасси ялĕ), А.П. Портнов (Шомик ялĕ), О.И. Аврамов (Уйкас Янасал ялĕ), Р.Г. Замятин (Ярак ялĕ), А.З. Терентьев (Çеçмер ялĕ), С.А. Сорокин (Хорнуй ялĕ), Н.Г. Иванов (Тренккă ялĕ), Р.В. Авилов (Çĕньял Хуракасси ялĕ), Ю.Г. Ершов (Кашмаш ялĕ).

Çапла, парăмçăсен списокĕ пĕчĕкех мар. Анчах та çавна манас марччĕ. Саккунпа çирĕплетнĕ тӳлевсене тӳлесех пулать. Налуксемпе страховани взносĕсем тĕллевлĕ тӳлевсем пулса тăраççĕ. Вĕсем çынсене пенсисемпе тивĕçтерессипе, социаллă тата медицина пулăшăвĕ парассипе, наци проекчĕсене вырăнти тата республика шайĕнче пурнăçа кĕртессипе тӳрремĕнех çыхăннă.

**И. ШОРОНОВА,**
**РФ федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6 № инспекцийĕн отчетсене анализ тăвакан тата парăмсене йĕркелесе пыракан пайĕн пуçлăхĕ.**

Партисен пурнăçĕнчен

# “Раççей чи вăйлă çĕршыв пулмалла”

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Тунти кун Муркаш райповĕн ларусен залне пуçтарăннисем (унта пурĕ 67-ĕн пулчĕç. Çав шутран “Единая Россия” партин вырăнти политканашĕн членĕсем, партин пирĕн районти пуçламăш уйрăмĕсен секретарĕсем, асăннă парти майлисен вырăнти канашĕн членĕсем, парти членĕсем) шăпах “Единая Россия” политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ тăратнă списокри кандидатсене пăхса тухрĕç, вĕсемшĕн пĕр саслăн пулса асăннă партин кадр резервне кĕме тивĕçлĕ тесе йышăнчĕç. Мĕншĕн тесен списока кĕртнĕ кандидатсен ĕçлеме пултараслăхĕпе çынлăхĕ пирки пĕр иккĕленӳ те çук. Ку чăннипех çапла пулнипе эсир кадрсен резервĕн списокĕнчи кандидатсен хушамачĕсемпе паллашсан хăвăрах ăнланатăр: ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ М.А. Михайловский, РФ Патшалăх Думин халăхсен хушшинчи ыйтусемпе ĕçлекен комитет председателĕ К.И. Косачев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ П.В. Семенов, Раççей Геройĕ, летчик-космонавт Н.М. Бударин, Раççей Геройĕ Е. Г. Борисов, Президент перинаталь центрĕн тĕп врачĕ А.В. Самойлова, Патăрьел районĕнчи “Малалла” СХА тата “Первомайск” СХПК ертӳçи М.В. Петров, педагогика ĕçĕн ветеранĕ Е.Д. Сергеева, И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш Патшалăх университечĕн 4 курс студенчĕ И.Ш. Калмыков, Шупашкар районĕнчи Кӳкеç ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ А.В. Юрьев.

Анлă ларăва килнĕ “Единая Россия” политика партийĕн регионти уйрăмĕн президиумĕн членĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн комитет пуçлăхĕ А.В. Щербаков пуçтарăннисене çак списокри кандидатсемпе паллаштарчĕ. Список пуçламăшĕнче тăракан Н.В. Федоровпа М.А. Михайловский пирки пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет. К.И. Косачев рядовой куçаруçăран советника, виçĕ премьер-министрăн халăхсен ыйтăвĕпе ĕçлекен помощникĕ, унтан тата малаллах ӳссе паянхи шая çитни хăех унăн ĕçлеме пултараслăхне çирĕплетсе парать. Списокри пур кандидатăн та хыçра Тăван çĕршыв аталанăвĕшĕн тунă нумай-нумай ырă ĕç. Списокри кандидатсем вара, ларăва килнисем, хăйсен шухăшкăмăлĕпе, хăйсемпе хăйсемех паллаштарчĕç. Ентешĕмĕр Раççей Геройĕ хыççăн Президент перинаталь центрĕн тĕп врачĕ А.В. Самойлова сăмах илчĕ.

–Урамсем ачасен кӳмисемпе тулчĕç. Хĕрарăмсем, ача амăшĕсем ыранхи куна, пуласлăха ĕненме, шанма пуçларĕç. Йывăр çын хĕрарăмсем ача çуратмалли çурта кипкесем тултарнă сумкăпа каймаççĕ халь. Йăлтах “Единая Россия” парти пуçарнипе пулнă ĕçсем çаксем. – Алла Владимировнан çак сăмахĕсем чăннипех те пирĕн çĕршывра ачасемпе ача амăшĕсене хӳтĕлемелли, пулăшмалли майсем хушăнсах пыни пирки, 4 наци проекчĕ те халăхшăн ĕçлени пирки калать.

И. Ш. Калмыков: “Эпĕ – паянхи çамрăксен представителĕ. “Единая Россия” политика партийĕ паян çамрăксене малалла пăхма вăй-хал парать. Çамрăксем паянхи куна ĕненеççĕ, апла пулсан ыранхи кунра та малашлăха кураççĕ”. Ильяс Шиазатович сăмахĕсем пурнăçпа тӳр килни çак ларурах курăнчĕ. Ларăва уçса ертсе пынă “Единая Россия” политика партийĕн пирĕн районти уйрăмĕн секретарĕ А.Н. Иванов “Единая Россия” парти членĕсене парти билечĕпе значокĕсене пачĕ. Çак кун вĕсене алла илнĕ 14 çын – пурте çамрăксем.

Педагогика ĕçĕн ветеранĕн Е.Д. Сергееван сăмахĕсем те шанăç параççĕ:

– Чи малти вырăнта воспитани пулмалла. Иккĕмĕш вырăнта – тарăн пĕлӳ парасси. Ывăл-хĕрсене çакна тĕпе хурса çитĕнтеретпĕр пулсан, пирĕн çĕршывăмăр чăннипех те вăйлă та çирĕп пулĕ.

Çакна шанса, пуласлăх паянхи кунран лайăх пуласса шанса чи тивĕçлисене “Единая Россия” партин кадрсен резерв списокне кĕртнĕ ĕнтĕ. Çавна шанса асăннă кандидатсене пĕр саслă пулса ырларĕç пуçтарăннисем. Вĕсен хушшинчен тухса калаçакансем те кандидатсем чăннипех çак шанăçа тивĕçлине пĕлтерчĕç. “Единая Россия” политика партийĕн пирĕн районти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕн çумĕ Н. П. Петрова списока кĕртнисенчен кашнинех тӳрĕ кăмăллă ĕçпе пĕлни пирки каларĕ. Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Б.А. Сапожников та çаплах шутлать. Москакассинчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Г.Г. Голубева ав кандидитсем валли шутламалли-ĕçлемелли тема ларурах сĕнчĕ.

– Паян Перекет банкĕнче пултăм. Мĕн чухлĕ ват çын тăрать унта. 1-3 тенкĕ налук тӳлеме ялсенчен район центрне килнĕ. Мĕн чухлĕ вăхăт, укçа çухалать вĕсен. Малтанхи пек çав налуксене ял тăрăхĕнче вырăнтах тӳлемелле тума çук-ши?

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕн сăмахĕсенче вара тĕлĕнни те, савăнни те пĕрлех:

– Паян парти билетне илекенсем пурте çамрăксем пулчĕç, – палăртсах каларĕ вăл кандидатсемпе кăмăллă пулни пирки пĕлтернипе пĕрлех. Хамăр ентешĕмĕр пирки уйрăмах çакна асăнчĕ:” Евгений Борисовичăн халь, чăннипех те, сывлăх та, кăмăл та çирĕп. Шăпах политикăна кĕме вăхăт.

Çак шухăша малалла тăсса çапла çеç каламалла пулĕ: тăван халăхшăн, çĕршывшăн малалла тăрăшмалла.

**Кĕске информаци: çак кунсенче Раççей Геройне Е. Г. Борисова хамăр районти “Герой” хуçалăхăн ертӳçин çумĕнче ĕçлеме шанчĕç. Хаçатăн çитес номерĕнчен пĕринче эсир Евгений Германовичăн малашнехи шухăш-кăмăлĕпе тĕплĕнрех паллашма пултаратăр.**

**Л. ПАВЛОВА.**

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн

# Пысăк педсоветсен вăхăчĕ

**Йăлана кĕнĕ республика педсовечĕ кăçал виçĕ тапхăрпа иртет. Малтанах августри форума шкулсенчи педагогсем пухăнчĕç. Унтан хăйсен умĕнчи татса памалли ыйтусене профтехучилищĕсемпе колледжсен тата аслă вĕренӳ заведенийĕсен преподавателĕсем сӳтсе явĕç. Юлашкинчен вара кăçал пуçласа шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен сотрудникĕсен педсовечĕ иртĕ. Ĕçе çапла майпа секцисемпе йĕркелени мĕнпе çыхăннă? Çак ыйтăва Е. Казнина ЧР вĕренӳ министрне Галина Чернована панă.**

– Ку хутĕнче пирĕн педагогсен анлă пĕлтерĕшлĕ стратегиллĕ задачăсене татса пама тивет. Аса илтеретĕп: çур çул каялла Чăваш Республикин Президенчĕ республикăри вĕренӳ ĕçне аталантарса пымаллин стратегийĕн 2040 çулччĕнхи проектне хатĕрлеме хушрĕ. Ку документăн тĕп тытăмĕ пур ĕнтĕ – шкул вĕрентĕвĕ енĕпе те, професси пĕлĕвĕ парассипе те. Августри канашлусенче, педагогсен пушă вăхăт пур чух, ку проектсене эпир тĕплĕ тишкерсе хак парасшăн. Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вăй хуракансен те пухăнса канашламалли çук мар. Ача çулталăкĕнче ку отрасле уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ, çак вăхăта унта татса памалли ыйтусем те сахал мар пуçтарăннă.

**– Пуçласа хăйсен пысăк педсоветне учительсем иртнĕ эрне кун пухăнчĕç. Учительсен республикăри форумĕнче мĕн пирки сăмах пычĕ-ха?**

– Кун йĕркинчи тĕп ыйту – шкулти вĕренӳ системин тухăçлăхĕ. Унта хывнă укçа-тенкĕ вĕренӳ пахалăхне ӳстерме пулăшмалла. Ĕçшĕн тӳлессин çĕнĕ системи пирки те чарăнса



**Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче математикăпа пĕрлехи патшалăх экзаменĕ иртет.**

тăмалла. Паллă ĕнтĕ, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăри пур шкулсенче те ĕçшĕн хавхалантару шучĕпе хушса тӳлеме тытăнаççĕ. Ку тĕллевпе ĕç укçи фончĕн 10 процентчĕ чухлĕ уйăраççĕ.

Кунпа пĕрлех 30 “миллионер”-шкулта ĕçшĕн тӳлессин çĕнĕ системине ĕçе кĕртмелле, база пайĕ пурăнма кирлĕ минимумпа тан пулмалла, стажа, вĕренӳ шайне, квалификаци категорине кура тĕрлĕрен коэффициентсем пулмалла. Çак коэффициентсене пула ăслă-тăнлă, пултаруллă учительсен ĕç укçи икĕ хут е ытларах та ӳсме пултарать. Пĕтĕмĕшле илсен вара шкул вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен пурин те ĕç укçи ӳсмелле. Чăваш Республикин Президенчĕн Н. Федоровăн Указĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вĕсен ĕç укçи виçи 20 процентран кая мар хăпарать.

**– Кăçал пирĕн республика вĕренӳ системине комплекслă çĕнетсе пыракан регионсен конкурсĕнче çĕнтерме пултарчĕ. Çак çĕнтерӳ пирĕн шкулсен тăнăçлăхĕ çинче палăрĕ-и?**

– Конкурсра çĕнтернĕ май “Вĕрентӳ” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн шкулсен пурлăх базине лайăхлатма кăçалах ĕнтĕ пысăк сумма укçа-тенкĕ хывнă. Вăл шутра унччен ытлашши пысăк тимлĕх уйăрман енĕпе те. Сăмахран, вĕрентӳ техникипе тата шкул автобусĕсемпе пĕрлех эпир шкул столовăйĕсем валли те оборудовани сахал мар туянатпăр. Хăшпĕр шкулсене вĕсем çитнĕ те ĕнтĕ, ыттисене те август вĕçĕнчен тытăнса сентябрьте тивĕçтерĕç. Пĕрремĕш класа каякансем валли сĕтел-пукан туянма 16 миллион тенкĕ уйăрнă. Кунсăр пуçне юлашки çулсенче пĕрремĕш хут шкул библиотекисем валли илемлĕ литература чылай туянса панă.

Ку вĕренӳ çулĕнче çĕнĕ шкулсем хута каяканнисем те пур. Республикипе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 6 вĕрентӳ объекчĕ хăйсен алăкĕсене уçĕ. Кусем вĕсем Улатăр, Йĕпреç тата Пăрачкав районĕсенчи çĕнĕ шкулсем, Çĕрпӳ районĕнчи профучилищĕн çĕнĕ вĕренӳ корпусĕ, Канаш хулинчи пĕтĕмĕшле çĕнĕрен тунă 22-мĕш № профтехучилище. Республика тĕп хулинче вара сентябрĕн 1-мĕшĕнче ытти вĕрентӳ заведенийĕсемшĕн эталон пулса тăракан 5-мĕш № гимнази хута каять. Ăна халех ĕнтĕ XXI ĕмĕр шкулĕ теççĕ.

**РЕДАКЦИРЕН.** Районта вĕрентӳ ĕçченĕсен августри конференцийĕ августăн 23-мĕшĕнче Нискасси шкулĕнче иртет. Унăн теми – “Экономика тата вĕрентӳ”. Конференцире шкулсенчи педагогсем хăйсен малашнехи задачисене сӳтсе явĕç, унччен хи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетĕç.



**Катькасри «Çăлкуç» пуçламăш шкул-садра заняти вăхăтĕнче.**

**Районта вĕрентӳ ĕçĕ цифрăсенче.** Районта шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем 30 шутланаççĕ. Вĕсене мĕн пур ачасен 70 процентчĕ çӳрет.

Шкулсем пĕтĕмпе 32. Вĕсенче 4651 ача пĕлӳ илет. Комплектлă классем 308. Преподавательсем 584.

Вĕрентӳпе культура центрĕсем районта 5, пуçламăш шкул-садсем 6 шутланаççĕ.

“Шкул автобусĕ” Президент программипе 2002 çулта Юнкăпа Нискасси, 2003 çулта Муркаш, Ильинка, Турай, Москакасси, Чуманкасси, 2004 çулта Пĕтĕм тĕнчери реконструкципе аталану банкĕн “Вĕрентӳ системин реформи” программипе Мăн Сĕнтĕр, Калайкасси, Йӳçкасси, 2007 çулта “Вĕрентӳ” приоритетлă наци проекчĕпе Оринин, Çатракасси, Ярапайкасси шкулĕсене шкул автобусĕсемпе тивĕçтернĕ.

Вунпĕрмĕш класран кăçал 469 яшпа хĕр вĕренсе тухнă. Вĕсенчен 8-шĕ шкула ылтăн медальпе, 13-шĕ кĕмĕл медальпе вĕçленĕ.

Шкул ачисем кăçал 25 предметпа Пĕтĕм Раççейри олимпиадăсен 2-3-мĕш тапхăрĕсене хутшăннă. Районти олимпиадăсене 1121 вĕренекен хутшăннă, вăл шутран призерсем 165 пулнă. Республикăри олимпиадăсене хутшăнма 63 вĕренекен тивĕçнĕ.

Пĕрлехи патшалăх экзаменне тытакансем 467-ĕн пулнă. Вĕсенчен 36 вĕренекен экзаменсене “5”, 213 вĕренекен “4”, 171 вĕренекен “3” паллăпа тытнă.

Хушма вĕрентӳ системине 2841 вĕренекене явăçтарнă. Ку вăл пĕтĕм вĕренекенсен 58,5 процентчĕ пулать.

Шкулсенче 275 компьютер шутланать. 1 компьютер пуçне 19 вĕренекен тивет.

Кăçал 1610 вĕренекен е пĕтĕм шкул ачисен 40 процентчĕ çу кунĕсенче ĕçпе кану лагерĕсенче каннă.